# Упрар тăван чĕлхемĕре

(Литературăпа юрă-кĕвĕ композицийĕ.)

***Тăршшĕпех ачасем калаçаççĕ***

***<u>«Тăван чĕлхе» юрра итлени (сăвви Александр Савельев-Сасăн, кĕвви Михаил Луковăн, юрлаканĕ Михаил Луков)</u>***

«Кала, юлташ, мĕн хаклă саншăн
Хальхи пуян çак тĕнчере?» -
Тесе ыйтсан сывламăп ассăн.
Эп калăп пат: «Тăван чĕлхе!»
Чăваш чĕлхи!
Унпа чĕвĕлтететĕп эпĕ
Кăшт ураланнă ачапа,
Кун-çул пирки хĕрсех пуплетĕп
Хура-шур курнă ватăпа.
Атте-анне чĕлхи! Çиç ĕмĕр!
Эп сансăр – хăрăк тунката:
Чĕлхе пулсассăн та – чĕлхесĕр,
Эп суккăр – куç пулсассăн та. (А. Савельев-Сас)

1-мĕш ача: Тăван чĕлхем! Чăваш чĕлхи! Мĕнле çепĕççĕн янăратăн эсĕ! Мĕн тăвăп эпĕ сансăр, мĕнле юрлăп? Маншăн эсĕ – хĕвел, пурăнас кунăм, сывлăшăм, ирĕкĕм. Маншăн эсĕ – анне чысĕ, тăван халăх чысĕ, юратнă чĕлхем, тăван чĕлхем!

Чĕлхем! Эс – чĕрĕлĕх çăл куçĕ.
Татулăх вăйĕ, чун уççи!
Эс шанчăк вучĕ, тĕрĕс куçăм,
Кăвак хуппи çĕкленĕ шуçăм,
Аваллăх ахрăмĕ, çӳпçи!

Халăх ăс-тăнĕпе унăн пĕтĕм тĕнче курăмне тăван чĕлхе чун парать. Тăван чĕлхесĕр чăн-чăн пĕлӳ çук. (И. Я. Яковлев)

Чĕлхе хăйне туса хунă халăхпа çеç вилет, çавăнпа халăха тăван чĕлхене манма хушни çав халăха вилме хушнипе пĕрех…(И. Я. Яковлев)

Этем тени тăван амăш, тăван халăх чĕлхисĕр йĕркеллĕ, пур енлĕ ӳсеймест.
(М.Я. Сироткин)

Пуçра мĕн чухлĕ шухăш санăн,
Мĕн чухлĕ ĕмĕт хальлĕхе.
Сана, ачам, пурне те панă
Чăваш чĕлхи, тăван чĕлхе. *(Я. Ухсай)*

Маншăн эсĕ, чăваш чĕлхи, - хĕвел, пурăнас кунăм, сывлăшăм, ирĕкĕм. Маншăн эсĕ – анне чунĕ, тăван халăх чысĕ, хавалĕ. *(В. Ахун)*

Савар, мухтар чĕлхемĕре,
Ăна усрар чыс-хисепре;
Унпа эпир ĕçе вĕреннĕ,
Чăн тÿпене çити çĕкленнĕ. *(В. Давыдов-Анатри)*

Чĕлхем! Санпа тĕнче уççи тытатăп, шухăшлама вĕрентрĕн эс мана. *(П. Хусанкай)*

Чăваш чĕлхи –
Эс ылтăн-кĕмĕлтен те хаклăрах,
Хĕрÿ те хÿхĕм хĕвелпе танах,
Чуна пырса тивет кашни сăмах… *(Ю. Сементер)*

Туссем калаçнă чух, тăван чĕлхемĕм,
Шур акăш тĕкĕ евĕр эс çемçе.
Санпа ман халăх чунĕ те илемĕ
çÿрет çÿлте те çĕр çинче вĕççе.

Юрланă чух сассу хитре те уçă:
Каять вăрман та, хир те янраса.
Чулсем çинче канми-тăми çăл куçĕ
Юхса йăпаннă пек сассу таса. *(Я.Ухсай)*

Чухăн мар вăл! Пуян та, чаплă та,
Çемçе те, вутлă та, хăватлă та.
Вăл çиçĕмлĕ, сисĕмлĕ, тÿсĕмлĕ.
çĕлен çăварĕнче те пĕтмен,
Юнлă тинĕссенче те путман.
Вутпа пĕтереймен ăна тăшман.
Ăçта çитмен вăл, мĕн пулман ăна,
çапах та курать ку çутă куна. *(Н. Шелепи)*

Эп чăваш ачи, саватăп
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхене.
Юратап сăвва-юрра та,
купăса та кĕслене.  *(В. Давыдов-Анатри)*

***<u>«Анне сăнарĕ» юрă (сăвви Вăрăм Палюкăнăн, кĕвви А. Патшинăн)</u>***

1-мĕш ача:  Ачасем, атьăр-ха ваттисен сăмахĕсене аса илер. Чăваш çыннисем, ватă çынсем сăмах, чĕлхе пирки мĕн каланине ăнланма, çак ăслă сăмахсене астуса юлма тăрăшар.

- Ăшă сăмах ăшалангă ашран та тутлă.

- Ăшă сăмах та, сивĕ сăмах та ăшран тухать.

- Ăшă сăмах – çу кунĕ, сивĕ сăмах – хĕл кунĕ.
- Ăс тенине мĕн виличчен пухаççĕ.
- Шур хут çине çырнине кĕреçепе хырма çук.
- Сăмахпа каличчен пуç тавра виççĕ çаврăнса шухăшла.
- Çăвартан тухнине утпа хуса çитеймĕн.
- Чĕлхе Мускава çитернĕ.
- Чĕлхеллĕ çын Чĕмпĕрте те вилмен.
- Сăмах вăл çерçи пулса вĕççе тухать, чакак пулса вĕççе кĕрет.
- Илтмен – пĕр сăмах, илтнĕ – пин сăмах.
- Каланă сăмах – кĕмĕл, каламанни – ылтăн.
- Сăмахпа тӳпене те сăрлама пулать.
- Чĕлхӳ каланине пуçу пĕлсе тăтăр.
- Тăван чĕлхе – пĕлӳ çăл куçĕ.
- Атте-анне чĕлхине юратмасăр Тăван çĕр-шыва юратма çук!

Çĕр çинче чи хаклă сăмахсем вĕсем – атте-анне, тăван кил, тăван чĕлхе. Вĕсем пĕр-пĕринпе юнпа, чунпа çыхăннă. Атте-анне çинчен тăван чĕлхепе юрланă юрă пирĕншĕн питĕ хаклă, ăна итлесен атте-анне сăнарĕ куç умне тухса тăрать.

Атте-аннене юратса пурăнар.
Вĕсене сыв чухне куç шăрçи пек упрар.
Аттепе аннене манас çук эп нихçан,
Тухрăм эп çул çине вĕсем тăрăшнăран.

***<u>«Атте-анне» юрă (сăвви те, кĕвви те С. Асаматăн)</u>***

Эп чăваш ачи, саватăп
Хамăрăн чăваш çĕрне.
Вăл кипке те ман, сăпка та,
Ăна манмăп ĕмĕрне.
Хумханать-и аслă Атăл,
Каш кашлать-и сĕм вăрман –
Савнă çĕрĕм-шывăм ман вăл
Сас парать мĕн авалтан. (П. Хусанкай)

***<u>«Чăваш ачи» юрă (сăвви Н. Ыдарайăн, кĕвви А. Никитинăн)</u>***

Тăван чĕлхене лайăх пĕлекен ытти чĕлхесене те юратса вĕренет, хисеплет. Тăван çĕр-шыва юратасси те тăван чĕлхерен пуçланать. *(Г. Ефимов)*

Эп сăмах хăватне ăнланатăп,
Эп пĕлеп сăмахпа этемле
Амантма та пулать, ӳкерме те,
ӳкнине те пулать çĕклеме. *(П. Хусанкай)*

Тăван чĕлхе – вăл тăван халăхăн нихçан иксĕлми ăс-тăн çăл куçĕ. Çак çăл куçран тумламăн-тумламăн эпир мĕн ачаранпах вăй илсе ӳсетпĕр.

Тăван чĕлхе – халăхăн ĕмĕр сÿнми ăс-тăн чечекĕ. Унта – Тăван çĕр-шывăн сенкер пĕлĕчĕ, уçă сывлăшĕ, аслати-çиçĕмĕ, хирĕ-уйĕ, улăхĕ-çаранĕ, тăвĕ-сăрчĕ, Атăлĕ-Пăли, унăн ытарайми юманлăхĕпе шĕшкĕлĕхĕ…

Тăван чĕлхе – халăхăн аваллăхĕ, тăван чĕлхе – халăхăн сумлă та телейлĕ малашлăхĕ.

Тăван чĕлхемĕрсĕм… Асаттесен пилĕ, асанненсен ту(ÿ)пи, кукамайсен пехилĕ, кукаçисен тилмĕрĕвĕ, анне юрри, атте ÿкĕчĕ, аппа такмакĕ, пичче вĕрентĕвĕ, шăллăм тавĕ, йăмăкăн ачашлăхĕ, хурăнташсен, кÿршĕсен ырă кăмăлĕ.

Тăван чĕлхемĕрсĕм. Тăван çĕр-шывăмăрсăм. Тăван аннемĕрсĕм… Эппин, ăслă ывăл-хĕр пуласчĕ пурин те пирĕн.

***<u>Юрă «Каç пулсассăн»    (С. Павлов репертуарĕнчен)</u>***